Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

89 (7729) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи ноябрĕн (чӳк) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Уява халалланă уявсем**

## Катькасра – врач уйрăмĕ, Яракра – Культура çурчĕ



***Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пĕтĕм Раççей халăхĕ хăйĕн çутă уявĕсенчен пĕрне – Халăх пĕрлĕхĕн кунне – паллă турĕ. Çак уяв Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансемшĕн уйрăмах асра юласси вара никама та иккĕлентерместь. Мĕншĕн тесен кунта уяв умĕн, ноябрĕн 3-мĕшĕнче, харăсах социаллă пĕлтерĕшлĕ икĕ объект хута кайрĕ. Мĕншĕн Халăх пĕрлĕхĕн кунĕпе çыхăнтармалла-ха çакна? Мĕншĕн тесен ку объектсене ытларах вырăнти халăх тăрăшнипе, спонсорсем пулăшнипе, пурте пĕрле пулса çине тăнипе ĕçе кĕртме пултарнă. Халăх пĕрлĕхĕ пулса тăмасть-и-ха вара çакă?***

*(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).*

**Сăн ӳкерчĕкре: Яракра Культура çуртне уçма ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Р.М. Лизакова та килсе çитрĕ.**

**Правительствăра**

## Республика бюджечĕ пысăкланать

Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров кĕçнерни кун республикăн Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ. Правительство членĕсем «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2009 çулхи тата планпа пăхнă 2010 тата 2011 çулсенчи тапхăрти республика бюджечĕ çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне пăхса тухнă.

«2009 çул вĕçленсе пырать. Вăл хуласемпе районсем планпа пăхнă кăтартусене пурнăçлас, республика бюджетне кирлĕ пек пуянлатас енĕпе юлашки вунă çулта чи йывăрри пулчĕ-тĕр. Çапах сӳтсе явма сĕнекен саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн республика бюджечĕ кăçал тупăш енĕпе тата 1 млрд та 113 млн та 700 пин тенкĕ чухлĕ пысăкланать, çав шутран 490 млн тенке яхăн бюджет дефицитне пĕчĕклетме каять, 625 млн тенке яхăн – паянхи условисенче пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама. Çакă чи малтанах граждансен социаллă прависене хӳтĕлессине, общество инфратытăмĕн йĕркеллĕ ĕçне тивĕçтерессине, ыттине пырса тивет», - тенĕ Президент.

Федераци çăл куçĕсенчен каялла тавăрса памалла мар йĕркепе килекен укçа виçи 1 млрд та 810 млн тенкĕ чухлĕ ӳсет, çав шутра федераци бюджечĕн субсидийĕсем – 1 млрд та 107 млн тенке яхăн, субвенцисем – 514 млн тенкĕ. Унсăр пуçне Чăваш Республикине бюджет шайлашăвне тивĕçтермелли мерăсем валли 700 млн яхăн тенкĕлĕх хушма дотаци уйăраççĕ (маларах 1 млрд та 500 млн тенкĕ илнĕ, пĕтĕмпе – 2 млрд та 181 млн тенкĕ).

«Çапла вара экономикăри кризис пулăмĕсене пăхмасăр Чăваш Республикин бюджечĕ хăйĕн позицийĕсене упраса хăварать кăна мар, хуласемпе районсен социаллă пурнăçпа экономикине аталантармалли хăвата ӳстерсе пырать», - палăртнă Николай Федоров.

**Ноябрĕн 10-мĕшĕ – Милици кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ МИЛИЦИ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Милици кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Служба тивĕçĕ сире хăюллă та хастар, çирĕп кăмăллă пулма хистет. Пĕтĕм ĕçе эсир пысăк яваплăхпа тăватăр: обществăлла йĕркелĕхе сыхлатăр, граждансен сывлăхĕпе пурнăçне, вĕсен Конституципе панă прависене хӳтĕлетĕр. Хăвăр тивĕçĕрсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратăр. Нимĕнле йывăрлăха, нимĕнле хăрушлăха пăхмасăр, лăпкăлăхпа тăнăçлăха сыхлатăр. Эсир преступленисене сирсе ярас, вĕсен йышне чакарас тесе тимлетĕр. Хăвăр тăрăшуллă пулнăран ĕнтĕ преступленисене уçса парасси те ӳссех пырать. Тавах сире çăмăл мар, пархатарлă ĕçĕршĕн.

Право йĕркине сыхлакан органсенчи ветерансен ячĕпе уйрăмах тав сăмахĕ калас килет. Эсир вара, çамрăк сотрудниксем, паян вĕсен опытне ăша хыватăр, ырă йăли-йĕркине малалла тăсатăр. Чăтăмлăх та, çивĕчлĕх те, хăвăр ĕçĕршĕн çунса тăни те кирлĕ çакна валли. Эсир малашне те, çакна асра тытса, хăвăрăн професси тивĕçĕсене таса чун-чĕререн пурнăçласса шанас килет.

Сире, сирĕн çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, ăнлану, телей сунатăп. Çемйĕрсенче лăпкăлăх хуçалантăр, çĕршывра тăнăçлăх пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



***«Пирĕн ĕçре тимлĕх, çине тăни, çирĕп тĕллевлĕ пулни тата çĕршывшăн ĕçлес кăмăл кирлĕ», – теççĕ эсир сăн ӳкерчĕкре куракан çамрăксем. Районти шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕнче вăй хураççĕ вĕсем. Юстици аслă лейтенанчĕ Павел Валерьевич Павлов, юстици лейтенанчĕ Алексей Валериевич Чернов, юстици майорĕ Елена Владимировна Круглова тата следстви уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан аслă следователь, юстици капитанĕ Иван Алексеевич Васюхин хăйсен професси уявĕ умĕнхи кăтартăвĕсемпе кăмăллă.***

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Оперативлăхпа тимлĕх – малашне те

***Професси уявĕ яланах кĕтнĕ уявсенчен пĕри. Милици кунне уявлама тивĕçлисен вара нумай чух уяв та канăçсăр иртет. Ĕçĕ тасти ещĕке чиксе хумалли мар çав, оперативлăх ыйтать. Эпир те районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Евгений Иванович ПЛЕЧОВА редакцие уяв кунĕччен чĕнме шутларăмăр.***

**– Евгений Иванович, Сире çитес професси уявĕпе саламлатпăр. Çакăнпа пĕрлех пирĕн ыйтусем çине те хуравлама ыйтатпăр.**

**Пур çĕрте те финанс кризисĕн витĕмĕ пирки калаçаççĕ. Сирĕн ĕç çине çак лару-тăру витĕм кӳмерĕ-и? Уяв умĕн иртнĕ 10 уйăхри кăтартусем кăмăла хăпартаççĕ-и?**

– Саламшăн тавах. Уяв умĕнхи кăтартусем кăмăла питех хуçмаççĕ темелле пулĕ. Малтанах республикăра çак тапхăрта преступленисен хисепĕ 9,3 процент чухлĕ чакнине каласа хăвармалла. Пирĕн района илес пулсан вара пĕтĕмпе асăннă тапхăрта йĕркене пăснă 374 тĕслĕх тупса палăртрăмăр. Пĕлтĕр пурĕ 413 преступлени пулнине çирĕплетнĕччĕ. Çапла вара районта преступленисен хисепĕ иртнĕ 10 уйăхра пĕлтĕрхинчен 9,4 процент сахалрах.

Пирĕн ĕçе преступленисене уçса панă тăрăх хаклаççĕ. Пĕтĕмĕшле вĕсен 80,5 процентне (пĕлтĕр 78,7 процент) уçса пама пултартăмăр. **(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).**

**Мĕн калаçтарать**

## Тĕрĕслĕх çиеле тухатех

Пирĕн редакцие çапла пĕлтерчĕç: «Взятка» пичет изданийĕ хăйĕн страницисенче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тĕлĕшпе элек-суя сарассине йĕркеленĕччĕ. Çак хаçатрах Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ пирки те чăнлăхпа пĕр килмен суя информаци пичетленĕ пулнă. Çакна пĕтĕмпех Э.В. Мочалов хатĕрленĕ. «Взятка» информаципе аналитика хаçачĕн учредителĕ шăпах вăл пулса тăрать. Номертен номере унта коррупципе тата преступноçпа кĕрешнипе «витĕнсе» хăйсем шухăшласа кăларнă хушаматсемпе чăнлăхпа çыхăнман сведенисем пичетленĕ.

Хăйĕн хаçатĕнче суя информаци пичетлени йĕркеллĕ япала пулманни пирки асăрхаттарсан, Мочалов пурне те çапла хуравланă: «Эп каланипе килĕшместĕр пулсан, суда парăр». Çапла вара августăн 12-мĕшĕнче, 2009 çулхи августăн 7-мĕшĕнче «Взятка» хаçатăн черетлĕ 6-мĕш номерĕ пичетленсе тухсан, В.Г. Данилов депутат ЧР Муркаш район судне заявлени çырса панă, хăйĕн чысне, тивĕçлĕхне тата ĕç репутацине хӳтĕлеме ыйтнă. Ĕçĕн пур енĕсене те тĕпчесе пĕлнĕ, свидетельсен кăтартăвĕсене, енсем ăнлантарса панисене итленĕ хыççăн темиçе суд ларăвĕ ирттернĕ май **2009 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче район сучĕ хăйĕн йышăнăвне тунă** – В.Г. Данилов пирки пичетлесе кăларнă сведенисем юрăхсăр, вĕсем унăн чысне, тивĕçлĕхне тата ĕç репутацине пăсаççĕ тесе йышăннă. Çавна май «Взятка» хаçат редакцине тата Эдуард Валерьевич Мочалова хаçатăн çывăх номерĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов пирки суя сведенисем пичетленĕ тесе хирĕçлени (опровержени) пичетлесе кăларма хушнă. Суд çавăн пекех мораль тĕлĕшĕнчен кӳнĕ сиеншĕн Э.В. Мочаловран тата «Взятка» хаçат редакцийĕнчен 30 пин тенкĕ шыраса илме йышăннă».

**Саламлатпăр**



Савнă мăшăра, юратнă аннене, ырă кăмăллă кукамая – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Светлана Никодимовна ПЕТРОВСКАЯНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе, ырă сунса тата хисеплесе пĕтĕм кăмăлтан саламлатпăр.

Юратнă аннеçĕм! Санăн кун-çулу вăрăм та тумхахсăр, сывлăху çирĕп пултăр. Пире, ачусене, пурнăç çулĕ çине тăма ăс-тăн, вăй-хăват, сывлăх панишĕн тав тăватпăр сана. Çемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăç пултăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Пысăк салампа мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Юратнă тата хисеплĕ ĕçтешĕмĕре, Ярапайкассинче пурăнакан тата кунти пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕнче чĕрĕк ĕмĕр ытла ача-пăча медсестри пулса ĕçлекен **Вера Владимировна ИЗЕКЕЕВАНА** сумлă юбилей – 50 çул – ячĕпе чĕререн тухакан сăмахсемпе ăшшăн саламлатпăр. Юратнă ĕçре ырă кăмăлпа вăй хурса татах нумай çул ял çыннисене телей кӳрсе пурăнма ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, ăнăçу та юрату сунатпăр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулни тăванусемпе пĕрлех пирĕншĕн те пысăк телей, тухăçлă ĕç никĕсĕ, малтуртăмлăх пуçламăшĕ, ыранхи кун ăнăçăвĕ.

Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕнче санăн савăк сассупа кăмăллă калаçăву чирлисене татах нумай çул вăхăтра сипленме пулăшса пытăр!

**Саламлаканĕсем: пĕрле ĕçлекенсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, асаннене, кукамая – Анаткас Турай ялĕнче пурăнакан **Ольга Ивановна ГРИГОРЬЕВАНА** 75 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурри пирĕншĕн пысăк телей. Çак кунах мăшăрĕпе – **Валериан Григорьевич ГРИГОРЬЕВПА** пĕрлешни 46 çул çитрĕ. Вĕсене çак ятпа саламласа малалла та пĕр-пĕрне хисеплесе, килĕштерсе пурăнма сĕнетпĕр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе пĕрле савăнса татах та нумай пурăнмалла пултăр сирĕн.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Муркашра пурăнакан **Виталий Ананьевич РОМАНОВА** ноябрĕн 8-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Вăл Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра водитель пулса 38 çул хушши пĕр аварисĕр ĕçлет. Юбилей ячĕпе сана мĕн пур ыррине кăна сĕнетпĕр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр. Сана сумлă юбилей ячĕпе саламласа вăрăм кун-çул пурăнма çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, канлĕ ватлăх сунатпăр. Ачусен, мăнуксен ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕ, хуньамăшĕ, пиччĕшĕ, инкĕшĕ, 3 шăллĕ, 3 кинĕ, Башкировсен, Трилинскийсен, Грачевсен çемйисем тата ытти тăванĕсем.**